Çур аки умĕн

Вăрлăхран та чылай килет

Паллă ĕнтĕ, пахалăхлă вăрлăхсăр пысăк тухăç илесси иккĕленӳллĕ. Апла пулин те юлашки вăхăтра пурнăç улшăнса пырать пулас. Акă мĕн пирки сăмах. Ӳсен-тăрансене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен Шупашкарти «Россельхозцентр» филиалĕ пирĕн районти чылай хуçалăхсен акмалли вăрлăхне тĕрĕслесе чир-чĕрпе сиенленнине тупса палăртрĕ.

Тĕрĕслев мĕн пирки калать-ха? Пур хуçалăхсенче те тенĕ пекех акмалли вăрлăх тĕрлĕрен чир-чĕрсемпе чирлĕ. Унăн хисепĕ 45–96 процентпа танлашать. Сăмахран, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра урпан «эльф» сорчĕ 96 процент, Чкалов яч. хис. хуçалăхра çак культурăн вăрлăхĕ 80 процент, Чапаев яч. хис. хуçалăхра çурхи тулăн «ирень» сорчĕ 88 процент, «Ударник» хуçалăхра урпан «биос-1» сорчĕ 92 процент, Суворов яч. хис. хуçалăхра урпа вăрлăхĕ 95 процент, Ильич яч. хис. хуçалăхра «Владимир П Р - 2 » çĕнĕ сорт 83 процент таран пĕтĕмĕшле чирленине тупса палăртнă.

Хальхи вăхăтра ытларах чухне çак чирсем палăраççĕ: гельминитоспориз, алтьерариоз, сенториаз, сузариоз, бактериоз, пăнтăх чирĕ т. ыт. те. Ытларах чухне вĕсене çĕр ăшĕнчи инфекци сарма пулăшать. Çавăнпа та таса тыр-пул туса илес тесен вăрлăх пахалăхĕ пирки те шутлас пулать. Вăрлăха акас умĕн хатĕрлесси, тĕрлĕрен чир-чĕртен тасатасси, çитĕнме лайăх майсем туса парасси пирки манмалла мар. Çакă çĕр çинче ĕçлекен кашни çыннăн таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Иртнĕ çул районти хуçалăхсенче çур аки ĕçĕсене туса ирттерме тĕрлĕрен вăрлăхсене 2100 тонна имçамланă. Вăрлăхсене имçамлассипе «Ударник», Суворов яч. хис., «Свобода», Ильич яч. хис., «Герой», «Оринино», «Восток» хуçалăхсем йĕркеллĕ ĕçленине палăртмалла. Çав вăхăтрах паха вăрлăх акса хăварассипе «Волга», Чапаев яч. хис., «Чемеево», «Хлебороб» хуçалăхсенче, «Лидер» агрофирмăра кирлĕ мерăсем йышăнма васкамаççĕ. Уйрăмах хресчен (фермер) хуçалăхĕсен акмалли вăрлăх тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалла. Вăрлăхсене вăхăтра кирлĕ препаратсемпе имçамласа акма хатĕрлесе çитермелле.

Халĕ ака кондицине ларакан вăрлăха хими тата биологи препарачĕсемпе имçамлама вăхăт ĕнтĕ. Пĕр килограмм вăрлăха та имçамламасăр акмалла мар. Хальхи вăхăтра çынсене ĕçлеме ансат биологи препарачĕ «Планериз» шутланать. Ăна Шупашкарти «Россельхозцентрăн» филиалĕ туса хатĕрлет. Вăл Шупашкар хулинчи Кăнтăр поселокĕнче Кременски урамĕнчи 36-мĕш çуртра вырнаçнă. Çавăн пекех ăна Муркашра та илме пулать. Адресĕ: Южнăй урам, 1-мĕш çурт. Хакĕ 1 литрĕ 150 тенкĕ. Пĕр тонна валли 0,5 килограмм препарат кирлĕ.

Çĕр улми вăрлăхне те çак препаратпа имçамлама пулать. 1 тонна çĕр улми вăрлăхĕ валли 1 литр ярса хуçăштармалла. Вăрлăха ларттиччен 2–3 кун маларах усă курмалла. Çак препаратпа усă курнă хыççăн, тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, вăрлăхăн шăтаслăхĕ 10–12 процент таран ӳсни паллă. Асăннă препарата 2 эрне таран усрама юрать. Пур хими препарачĕсемпе те хутăштарма май пур. Препаратсене туянакансене республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕ хушса тӳлеççĕ. Çавна валли кирлĕ документсене ЧР Ял хуçалăх министерствине вăхăтра хатĕрлесе парас пулать.

Хими препарачĕсене туяннă чухне çакна асра тытма сĕнетпĕр. Вĕсене ЧР Ял хуçалăх министерстви çирĕплетнĕ организацисенчен кăна илме юрать. Вĕсен препарачĕсемшĕн тата Ял хуçалăх министерстви çирĕплетнĕ списокри препаратсемшĕн кăна хушса тӳлеççĕ.

ЧР Ял хуçалăх министерстви 9 предприятие хими имçамĕсемпе сутă тума ирĕк панă. Çавăн пекех тĕрлĕрен 119 препаратшăн хушса тӳлеççĕ. Кăçал вара Муркаш районĕнчи çĕр ĕçĕпе ĕçлекен хуçалăхсене 1400 пин тенкĕне яхăн хушса тӳлеççĕ.

Вăрлăхлăх тырăна 2009 çулта çак препаратсемпе имçамлама юрать: ТМТД-плюс «К» кĕрхи тата çурхи тулă вăрлăхĕсене имçамлама, çавăн пекех урпана имçамланă чухне 1 тонна пуçне 2,5 килограмм виçепе усă курмалла, «венеций», «СК» тулă, ыраш, урпа чухне 1 тонна пуçне – 1,5–2,0 килограмм. «Агросил» тулă, урпа тата сĕлĕ вăрлăхĕсем валли 1 тонна пуçне 0,3–0,4 килограмм кирлĕ.

«Дивидент», «СТАР-КС» препаратсемпе çурхи тата кĕрхи тулă, урпа, сĕлĕ, ыраш культурисене имçамлама усă кураççĕ. Усă курмалли виçи – 1 тонна пуçне 1 килограмм. Фундазол – сĕлĕ, тулă, ыраш, урпа валли 1 тонна пуçне 2–3 килограмм. «Колорадо-Супер» – кĕрхи тата çурхи тулă, урпа, ыраш валли норми тонна пуçне 1,5–2 килограмм. «Премис, КС» препаратсемпе тулă, урпа, ыраш, сĕлĕ вăрлăхĕсене имçамлама сĕнеççĕ. Норми 1 тонна пуçне – 1,5–2 килограмм. «Премис Двести» тулă, урпа, ыраш, сĕлĕ вăрлăхĕсем валли юрăхлă (1 тонна пуçне 0,19–0,25 килограмм).

Тата ытти препаратсемпе те усă курма юрать. Анчах та вĕсемпе ятарлă списокра кăтартнисемпе кăна усă курма пулать. Çак имçамсем ятарласа усă курма ирĕк панă списокра пулмалла. Ку списокри препаратсемпе 2009 çулта усă курма юрать. Вăл списоксене республикăри «Россельхозцентр» уйрăмĕнче тупса илме пулать.

Хими препарачĕсемпе усă курнă чухне хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнас пулать. Кунта ĕçлекенсен пурин те медосмотр тăмалла, кунта ĕçлеме ирĕк пулмалла. Хими препарачĕсемпе ĕçлеме инструктаж илсе алă пусса çирĕплетмелле. Çавăн хыççăн кăна вĕсемпе ĕçлеме юрать.

А. СЕМЕНОВ,
«Россельхозцентрăн» Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп агрономĕ.

Вĕрентӳ

Ĕçе тĕплĕн пурнăçламалла

Вĕрентӳ ĕçне общество хутшăнасси тата ăна тимлĕх уйăрасси 2006 çултанпа анлăн пулса пырать. Шкулсенче ертсе пыракан канашсем, попечительсен канашĕсем ĕçлеççĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн те хăйĕн попечительсен канашĕ пур. Унăн председателĕ пулма Н.Г. Ванеркина («Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçи) шаннă.

Апрелĕн 9-мĕшĕнче попечительсен канашĕ хăйĕн черетлĕ ларăвне ирттерчĕ. Ларура канашăн ĕçне вăйлатмалли тата канаша анлăлатмалли пирки каларĕç. Йыша анлăлатасси вара çак ĕçе ытти хăш-пĕр çынсене явăçтарассипе çыхăннă.

Шкулсемпе садиксенче ĕç укçи çумне хавхалантармалли пай хушса тӳлени пирки те сăмах пулчĕ ларура. Ку тӳлев учитель е воспитатель мĕнле ĕçленинчен килет. Ĕçленине хаклама критерисем палăртнă ĕнтĕ. Вĕсене тишкерсе тухса пĕрремĕш çур çула валли попечительсен канашĕ критерисене çирĕплетме сĕнчĕ. Иккĕмĕш çур çулта вара критерисен шутне улшăнусем кĕртме палăртрĕç.

Çапла вĕрентӳ тытăмĕнче общественность хутшăннипе палăрăмлă ĕçсем пулса пыраççĕ. Ку вара вĕрентекенсене тăтăшах квалификацие ӳстерме, тарăнрах пĕлӳ пама тата ĕçе тĕплĕн пурнăçлама хистет.

Н. НИКОЛАЕВА.

Шалти ĕçсен пайĕнчен

Процессуаллă йышăнусем пулĕç

Кăçалхи февраль уйăхĕнче Муркаш тăрăхĕнче «Взятка» хаçат сарăлчĕ. Ăна (тĕп редакторĕ Э.В. Мочалов) Шупашкарти «Новое время» издательство çуртĕнче пичетленĕ. Хаçатри материалсем пирĕн районти йĕркене сыхлакан органсен, «Единая Россия» партин Муркашри уйрăмĕн политканашĕн секретарĕн А.Н. Иванован, Етĕрнере вырнаçнă экономика преступленийĕсене хирĕç кĕрешекен оперативлă шырав пай пуçлăхĕн И.М. Илларионован тата йĕркене сыхлакан органсен пĕтĕм ĕçĕн интересĕсене пырса тивеççĕ.

Процессуаллă йышăнусем тумашкăн И.М. Илларионован заявленине тата милицисен ĕçне тишкернĕ материалсене Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайне çитернĕ. А.Н. Иванован заявленине тата хаçата туса кăларнă ĕçĕн материалĕсене Шупашкарти Московски районĕн шалти ĕçсен пайне ярса панă (хаçат çав вырăнта пичетленнĕрен).

В.И. МИХАЙЛОВ,
Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайĕн милицин участковăй уполномоченнăйсен уйрăмĕн пуçлăхĕ.

Район администрацийĕ çумĕнчи тĕн пĕрлешĕвĕсемпе çыхăнса ĕçлекен канашăн ларăвĕ иртрĕ

Йăлтах чун тасалăхĕпе çыхăннă пулĕ...

Çак кунсенче район администрацийĕ çумĕнчи тĕн пĕрлешĕвĕсемпе çыхăнса ĕçлекен канашăн ларăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи, асăннă канаш председателĕ А.Е. Андреева ертсе пычĕ.

Чи малтан унта Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацийĕ Александр Невски Благовернăй княçăн чиркĕвĕн прихучĕпе халăха нравственность тата ăс-тăн тĕлĕшĕнчен воспитани парассипе мĕнле çыхăнса ĕçленине пăхса тухрĕç. Асăннă ял тăрăхĕн тĕп специалисчĕ А.И. Булавкина каланă тăрăх, Уйкас Янасалти чиркӳ настоятелĕнче Иван атте ĕçлеме пуçланăранпа нумай ырă улшăну пулса иртрĕ. Ял тăрăхĕн территорийĕнче иртекен пĕр мероприяти те вăл хутшăнмасăр иртмест. Çурхи ака-сухана тухмалла-и е вырмана – Иван атте пил парать. Вăл шкулта иртекен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене те, кунти ытти мероприятисене те хутшăнать. Иван атте хăй каланă тăрăх та халăхра ĕненӳ туйăмĕ ытларах палăрма пуçлани сисĕнет. Шкултан вĕренсе тухнă пĕр çамрăк Чулхулари духовнăй семинарине вĕренме кайрĕ. Çамрăк мăшăрсем те пил илме Иван атте патне пыраççĕ.

Ял тăрăхĕпе чиркӳ прихучĕн пĕрле татса памалли ĕçсем вара сахал мар-ха.

– Ăнăçсăр çемьесемпе пĕрле ĕçлемелле пирĕн, – терĕ Иван атте ларура. – Çынсен чунне лайăхлатмалла.

Чăннипех те, кунта ял тăрăхĕсемпе чиркӳсен, шкулсен, культура учрежденийĕсен пĕрле ĕçлемелли, шутламалли нумай: çынсем эрех-сăра енне туртăнма пуçлани те, хăйсен çине хăйсем алă хуракансем тĕл пулсах тăни те çынсемпе уйрăммăн ĕçлемелли çинчен калать. Çамрăксем эрех-сăрапа иртĕхнипе те килĕшсе ларма юрамасть.

– Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çĕрле эрех сутакан магазинсемпе кафесен ĕç вăхăтне кĕскетме пултараççĕ, – терĕ Алевтина Евстафьевна. – Çамрăксемпе уйрăммăн ĕçлемелле. Çав тĕл пулусене священника, влаç представителĕсене чĕнмелле.

Пурнăçри кашни утăм чун тасалăхĕпех çыхăннă пулĕ. Тĕслĕхрен, хамăр таврал пăхар-ха. Килте, картишĕнче тасататпăр та, мĕн пур çупçапа урама тухса тăкатпăр. Кун пек тума юраманнине ăнлансах. Ларура иккĕмĕш ыйтупа шăпах ял тăрăхĕсен территорийĕсене тирпейилем кĕртес, Мăн куна тивĕçлипех кĕтсе илес ыйтăва пăхса тухрĕç. Çатракасси, Муркаш, Оринин, Турай ял тăрăхĕсем ку енĕпе мĕнле ĕçленине тишкерчĕç. Муркашра тирпей-илем ĕçĕсене лару иртнĕ кунах – эрне кун туса ирттерчĕç. Ытти ял тăрăхĕсенче те ку ĕçе Мăн куннăн пурнăçлама палăртаççĕ.

Кунта акă мĕн палăртса хăварас килет. Тирпейлĕх кашни кун çӳп-çап пуçтарнинчен килмест-çке. Чи кирли кунта – ăна урама кăларса пăрахмалла мар. Урамра утса пынă чух хут татăкне е ытти япалана ятарлă ещĕке пăрахма йывăр-им? Çава çинче тĕрлĕрен ăпăр-тапăр йăваланса выртни тата епле килĕшӳллĕ пултăр. Унта паян-ыран тирпейлеме пырса кĕме çул япăххи чăрмантарать. Çава çине каякан çулсене тăвасси йывăр ыйту пулни Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕн А.В. Павловăн сăмахĕнчен те курăнчĕ:

– Ялсем хушшинчи çула тăвассишĕн эпир яваплă пулса тăратпăр, анчах çăвасем çине каякан çула камăн тумаллине ниçта та палăртман, – терĕ вăл.

Йăлтах хамăртан килетçке. Хамăр хыççăн тирпейлĕ хăвармалла çеç. Ларура масар çине кĕнĕ çĕрте тирпейлĕх çинчен аса илтерекен планшетсем вырнаçтарасси çинчен те калаçрĕç.

Юлашки çулсенче районта чиркӳсем хушăнсах пыни, çынсенче ĕненӳ туйăмĕ вăранса пыни çинчен калать пулĕ. Ларура уйрăм ыйтупа Йӳçкасси ял тăрăхĕпе кунти чиркӳ прихучĕ чиркĕве туса çитерессипе мĕнле ĕçленине палăртрĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.Н. Иванов ĕненекенсенчен пуçтарнă укçа чиркĕве хута яма çителĕксĕррине, ку ыйтупа предпринимательсемпе тачăрах ĕçлессине палăртрĕ. Чиркӳ старости З.М. Кутузов çакнашкал лару питĕ усăллă пулни, ăна вырăна тухса ирттерни те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен каларĕ. Канаш членĕсем вăл сĕннине ырларĕç. Кашни ыйтупа тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

Л. ПЕТРОВА.

Ĕненекенсене валли

Ваттисене асăнса, масарсене тирпейлĕ тытар

Çулталăкри чи çутă уяв – Мăн кунччен шутлă кунсем юлчĕç. Мăн кун эрни тухсан ваттисен кунне асăнаççĕ. Мĕн пĕлмелле пирĕн çак кунсенче? Çак ыйту тавра калаçрăмăр та эпир Муркашри Владимирски Турă Амăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕпе Федор аттепе. Хăйĕн сăмахне Федор атте акă мĕнрен пуçларĕ:

– Чи çутă та аслă праçник – Мăн кун çитсе килет. Çак куна эпир çулталăкĕпех кĕтетпĕр, хатĕрленетпĕр. Аслă типĕре типĕ тытатпăр. Çапла майпа хамăра тунă çылăхсенчен тасататпăр, пӳрт-çурта, урамсене тасататпăр, тирпейлетпĕр, илемлететпĕр. Мăн кун эрни иртсен пĕрремĕш ытлари кун вара Ваттисен кунне асăнатпăр.

– Федор атте, ваттисене асăнмалли йĕрке çинче тĕплĕнрех чарăнсан аванччĕ. Çамрăксем кăна мар, пур ватăсем те тен пĕлсе çитереймеççĕ ун çинчен?

– Ваттисен кунĕнче эпир масар çине каясси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Хамăрăн вилнĕ тăванăмăрсен вил тăпри çинче пулса вĕсене асăнатпăр, кĕл тăватпăр.

Çакна асра тытмалла. Чи кирли – кĕл туни. Масар çине кайма пуçтарăнсан малтан чиркĕве кĕмелле. Чиркĕве килнĕ ытти çынсемпе пĕрле кĕлĕре тăмалла, çурта çутмалла. Просфор кастарма заказной памалла – ку чи кирли.

Ваттисене асăннă хыççăн чиркӳре панихида тăватпăр. Панихида вĕçĕнче ваттисен праçникне илсе пынă çимĕçсене Турă шывĕпе сирпĕтсе тасататпăр. Çав кĕл тунă çимĕçе киле илсе кайса асăнса çиеççĕ. Кунта çакна та каласа хăвармалла. Пур кĕл тунă çимĕçе киле илсе каймасан та юрать. Чиркĕве хăварни лайăх: вăл Турра парне пани пулать. Çавăнпа та чылайăшĕ çимĕççене ятарласа чиркӳре хăварма та илсе пырать.

– Масар çине çитсен, мĕн тумалла, мĕн пĕлмелле?

– Вилнĕ тăвансене юратса вил тăприне таса та тирпейлĕ тытмалла. Вил тăпри вăл –вилнĕ тăванăн чĕрĕлсе тăмалли вырăнĕ. Масар çине çитсен, çурта çутсан аван пулмалла, ăна асăнса кĕлĕ вуламалла, Турă унăн чунне канлĕх кĕрттĕр тесе акафист е канон вулама юрать. Вилене асăнса кĕске кĕлĕ вулани аван пулмалла, Евангели е Псалтирь вулама юрать. Вара вил тăприне тирпейлемелле, тăвана аса илсе пĕр хушă шăп тăмалла. Масар çинче ытлашши нумай тăмалла мар. Нумай вăхăт кулянни чуна ыраттарать, чуна кичемлĕх вырнаçма пултарать. Пур çĕрте те, çав шутра масар çинче те, виçине пĕлмелле.

– Масар çине мĕнле çимĕç илсе кайма юрать вилнисене асăнма?

– Ытларахăшĕ масар çинче асăнса çини килте асăннинчен лайăхрах тесе шутлаççĕ. Ку апла мар. Тĕрĕссипе, ваттисене килте асăнса çимелле. Ваттисене апат çисе тĕрĕс асăнни Турăна çав çыншăн парне пани пулать. Ăпата масар çине илсе каймасан та юрать. Эрех пач та ĕçме юрамасть масар çинче. Ку вăл çăвана тасамарлантарни пулать. Спирт пур шĕвек чуна çĕклентерсе ярать. Вилнисене асăнни вара пĕрре те савăнмалли сăлтав мар.

Мĕнле çимĕçпе асăнасси енчен вара чару çук. Çакна çеç асра тытмалла: типĕ вăхăтĕнче типĕ апат пултăр, типĕрен тухсан – кирек епле çимĕç те.

Енчен те çăва çинче асăнса çиме апат-çимĕç илтĕр пулсан, çакна асра тытмалла. Асăннă хыççăн юлнă апат-çимĕçе масар çинче пăрахса хăвармалла мар, киле илсе килмелле. Нумайăшĕ çапла тума хăрать, кун пек юрамасть, имĕш. Тĕрĕс мар ку. Хăвăрах шутласа пăхăр. Виле валли шăтăк чавма кайсан, кĕреçесене, ытти ĕç хатĕрĕсене унта пăрахса хăвармастпăр вĕт. Апат та çавах. Пăрахса хăвармалла мар. Çумăр хыççăн, çанталăк ăшăтса янă хыççăн вил тăпри çинчи çимĕççем çĕрсе выртни, пушă банкăсемпе кĕленчесем йăваланни пĕрре те йĕркеллĕ мар. Эпир пурте леш тĕнчене каймалласкерскем. Нивушлĕ сирĕнтен хăшĕ те пулин хăвăр çинче çакăн пек тирпейсĕрлĕх пултарас килет. Çук вĕт. Апла пулсан, айтăрха, тăванăмăрсем, ваттисене асăннă хыççăн çава çинче тирпейлĕ пултăр тесе тăрăшар, унта нимĕн те пăрахса хăварар мар. Çакă вăл хамăртан ĕмĕрлĕх уйăрлнă тăвансене хисеплени, юратни пулать.

Сăмаха вĕçленĕ май пурсăра та çывхарса килекен çутă та аслă уяв – Мăн кун ячĕпе саламлатăп. Сире пурне те Турă çăлтăр. Сывлăх сунатăп, телейлĕ пурăнăр. Пĕр вĕçĕм ĕмĕрлĕх пурнăç çинчен асра тытса, чуна тĕрĕс мар утăмсенчен сыхлăр. Сире те, Лидия Петровна, çавнах сунатăп.

– Тавах, Федор атте, калаçушăн.

Л.ПАВЛОВА калаçнă.